Ч1-111
37128



# В. И. ЛЕНИН

# ГЕРЦЕНА АСĂНСА

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ■ 1941

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ОБЯЗАТ
г.
№

В. И. ЛЕНИН

# ГЕРЦЕНА АСĂНСА

И. Яковлев КУҪАРНĂ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1941

Редактор перевода В. А. ДОЛГОВ.

НТ 4052. Сдано в набор 25|III-41 г. Подписано к печати 29|V-41 г.

Объем 0,75 п. л. Тираж 2400 экз. Зак. № 894.

г. Канаш, Типография Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

Герцен çуралнăранпа çĕр çул иртрĕ. Социализмăн чи пысăк ыйтăвĕсенчен тимлĕн пăрăнса, революционер Герцен либералтан мĕнпе уйрăлса тăнине тĕплĕн пытарса, ăна пĕтĕм либеральнăй Россия чыслать. Сылтăмри пичет те Герцена аса илет, вилес умĕн Герцен революцирен пăраннă тесе куçкĕретĕнех суять. Ютçĕршывсенче вара Герцен çинчен народникла тата либералла калаçнисенче сăмах, сăмах çеç пуçпулса тăрать.

Рабочисен партийĕ Герцена обывателле ырă сăмахсем çаптарас шутпа мар, хăйĕн задачисене тавçăрса илме, вырăс революцине хатĕрлес тĕлĕшпе питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă писателĕн историллĕ чăн-чăн вырăнне тавçăрса илмешкĕн аса илмелле.

Герцен иртнĕ ĕмĕрĕн пĕрремĕш пайĕнчи дворянла, помещикла революционерсен ăрăвĕнчен тухнă. Дворянсем Российăна Биронсене тата Аракчеевсене панă, шутсăр нумай „ӳсĕр офицерсене, çатăлтисене, картла вылякансене, ярмарка геройĕсене, йытă кĕтӳçисене, çапăçма юратакансене, хĕнекенсене, аскăнсене“ тата çăмăл ăслă Маниловсене панă. „Çавсем хушшинчех,—çырнă Герцен,—декабрĕн 14-мĕшĕнчи çынсем, тискер кайăк сĕчĕпе, Ромулпа Рем пек, тăрантарса ӳстернĕ геройсен фаланги аталаннă... Вĕсем—пуçран тытăнса урана çитиех таса хурçăран шăратнă, тĕлĕнмелле паттăрсем, çамрăк ăрăва çĕнĕ пурнăçпа пурăнма вăратас тесе, чуралăхпа палачсем хушшинче çуралнă ачасене тасатас тесе, хăйсем пĕтсе ларассине ĕнтĕ ăнлансах тухнă воин-сподвижниксем“.

Çавăн пек ачасем шутĕнче Герцен хăй те пулнă. Декабристсен восстанийĕ ăна вăратса „тасатнă“. XIX ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчи крепостной Российăра вăл çавтери çӳле хăпарса хăй вăхăтĕнчи чи аслă мыслительсемпе пĕр-

тан пулма пултарнă. Вăл Гегелĕн диалектикине ăнланса илнĕ. Ăна вăл „революцин алгебри“ тесе ăнланнă. Вăл Гегельрен иртсе малалла, Фейербах хыççăн, материализм патне кайнă. 1844-мĕш çулта çырнă „Письма об изучении природы“ çырусенчен пĕри,—„Эмпирия и идеализм“ ятлă малтанхи çырăвĕ,—вăл халĕ те-ха, кучухнехи питех те йышлă естествоиспытатель-эмпириксенчен тата кучухнехи философсен, идеалистсемпе çурма-идеалистсен темĕн чухлĕ темисенчен çавтери çӳлте тăракан мыслитель пулнине палăртса тăрать. Герцен диалектикăллă материализм патне таччăнах çитсе тăнă та историллĕ материализм умĕнче чарăннă.

Çав „чарăну“ ĕнтĕ 1848-мĕш çулти революци поражени тӳснĕ хыççăн Герценăн шухăш-кăмăлне аркатнă та. Герцен вара Российăран тухса кайнă та çав революцие тӳррĕмĕнех курса сăнанă. Ун чухне вăл—демократ, революционер тата социалист пулнă. Анчах унăн „социализмĕ“ 48-мĕш çул эпохинчи çавтери нумай тĕслĕ, нумай формăллă буржуаллă тата вакбуржуаллă социализмăн пĕр форми кăна пулнă, çав нумай тĕссемпе формăсене июнĕн кунĕсем яланлăхах тĕп тунă. Тĕрĕссипе илсен, вăл пачах та социализм пулман, вăл кăмăллă сăмах çеç, ырă ĕмĕт çеç пулнă, çак ĕмĕт урлă буржуаллă демократи, çавăн пекех тата буржуази влиянийĕнчен тухса çитеймен пролетариат та, хăйĕн у н ч у х н е х и революцилĕхне палăртса тăнă.

1848 çул хыççăн Герценăн шухăш-кăмăлĕ арканни тата унăн тарăн скептицизмĕпе пессимизмĕ вара социализмра б у р ж у а л л ă и л л ю з и с е м арканнине пĕлтернĕ. Герцен шухăш-кăмăлĕн драми—буржуаллă демократин революцилĕхĕ ĕ н т ĕ (Европăра) пĕтсе пыма пуçланă вăхăтри, социалистла пролетариатăн революцилĕхĕ вара пиçсе çитме ĕ л к ĕ р е й м е н вăхăтри пĕтĕм тĕнчипе паллă-историллĕ эпохă çуратнă тата вăл эпохăна палăртса тăни пулнă. Çакна ĕнтĕ халĕ Герцен скептицизмĕ çинчен хитре сăмахсем каланипе хăйсен контр-революцилĕхне витсе хуракан рыцарьсем, Российăри либералла сăмах çаптаракан рыцарьсем, ăнланман тата ăнланма та пултарайман,

1905 çулти революцине сутнă, революционер текен аслă ят çинчен шухăшлама та манса кайнă çав рыцарьсемшĕн, скептицизм вăл демократирен либерализм патне,—48-мĕш çулта рабочисене персе вĕлернĕ, арканнă тронсене каялла таварнă, Наполеон III-мĕшне алă çупса хапăл тунă либерализм патне, Герцен, унăн класлă природине пĕлмен пулин те, ылханнă либерализм патне, холуйла, ирсĕр, вараланчăк тата тискер либерализм патне куçмалли форма кăна пулнă.

Герценăн скептицизмĕ вара „классен тулашĕнчи“ буржуаллă демократизм иллюзийĕсенчен пролетариатăн хаяр, çирĕп, никам çĕнтерейми класлă кĕрешĕвĕ патне куçмалли форма пулнă. Бакунин патне, „Письма к старому товарищу“ текен çырусем, Герцен хăй виличчен пĕр çулталăк маларах, 1869 çулта, çырнă çырусем çакна çирĕплетсе параççĕ. Анархист Бакунинран Герцен уйăралать. Чăн та, вăл уйрăлура Герцен тактикăллă разногласисем кăна куратьха, унта вăл хăйĕн класĕ çĕнтерессине шанса тăракан пролетари миросозерцанийĕ тата хăйĕн çăлăнăçĕ пулассине шанман вак буржуан миросозерцанийĕ хушшинчи тарăн уйрăмлăха курмасть-ха. Чăн та, Герцен кунта та каллех буржуалла-демократиллĕ кивĕ сăмахсене: социализм „работникпе хуçине те, çĕрĕçлекенпе мещанина та пĕр пекех вĕрентмелле“ тенĕ сăмахсене тепĕр хут калать. Анчах çапах та, Бакунинран уйăрălса, Герцен либерализм еннелле мар, Интернационал еннелле, Маркс ертсе пынă Интернационал еннелле,—пролетариатăн „полкисене пухма“, „ĕççĕр пурăнакан тĕнчене пăрахакан“, „рабочисен тĕнчине“ пĕрлештерме пуçланă Интернационал еннелле çавăрăннă!

---

1848-мĕш çулти пĕтĕм движенин буржуалла-демократиллĕ ăшчиккине тата Марксченхи социализмăн пĕтĕм формисене ăнланаймасăр, Герцен пушшех те вырăс революцин буржуаллă ăшчиккине ăнланма пултарайман. Герцен—„вырăс“ социализмĕн, „народничествăн“ никĕсне хываканĕ. Хресченсене çĕр парса ирĕке кăларассинче,

çĕре общинăпа тытса тăнинче тата „çĕр тивĕçĕн“ хресченле идейинче Герцен „социализм“ курнă. Хăйĕн çак тĕлĕшри юратнă шухăшĕсене вăл нумай-нумай хутчен çырса панă.

Тĕрĕссипе илсен, Герценăн çав вĕрентĕвĕнче, вырăссен пĕтĕм народничествинчи пекех—хальхи „социалист-революционерсен“ тĕссĕрленнĕ народничестви таранах—социализм **пĕр чĕптĕм те** çук. Ку вăл—Хĕвеланăçĕнче „48-мĕш çулти социализмăн“ тĕрлĕ формисем пекех—Российăри буржуалла хресченле демократин **революцийĕхне** палăртса тăракан кăмăллă сăмах çеç, ыра ĕмĕт çеç пулса тăрать. Хресченсем 1861 çулта çĕр мĕн чухлĕ ытларах тата мĕн чухлĕ йÿнĕрех илнĕ пулĕччĕç, помещик-крепостниксен влаçне çавăн чухлĕ вăйлăрах аркатнă пулĕччĕç, Российăри капитализм çавăн чухлĕ ирĕкрех, хăвăртрах тата анлăнрах аталаннă пулĕччĕ. „Çĕр тивĕçĕ“ текен тата „çĕре танлаштарса валеçес“ идея вăл—помещиксен влаçне пĕтĕмĕшпех пĕтерессишĕн, помещиксен çĕр тытăмĕн йĕркине пĕтĕмĕшпех сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешекен хресченсем пĕртанлăх патне революциллĕ майсемпе туртăннине формулировка туса пани кăна пулать, урăх нимĕн те мар.

1905 çулти революци çакна уççăнах кăтартса пачĕ: пĕр енчен, пролетариат, хăйĕн социал-демократла рабочи партине туса, революциллĕ кĕрешĕвĕн пуçĕнче пĕтĕмĕшпех хăйне уйрăм пулса тухнă; тепĕр енчен, революциллĕ хресченсем („трудовиксем“ тата „хресченсен союзĕ“), помещиксен çĕр тытăмне хирĕç, „çĕр уйрăм харпăрлăх пулнине пĕтересси таранах“ тăрса, шăпах хуçасем пек, вак предпринимательсем пек кĕрешнĕ.

Хальхи вăхăтра çĕре тытса тăма „социалистла“ тивĕç т. ыт. çинчен сăмах ваклани вăл—чăннипех те кирлĕ тата истори тĕлĕшпе паллă ыйтăва: вырăссен **буржуаллă** революцинчи либеральнăй буржуазипе революциллĕ хресченсен **интересĕсен** уйрăмлăхĕ çинчен, урăхла каласан, çав революцири либералла тата демократилле, „соглашателле“ (монархилле) тата республикăлла туртăм

ҫинчен пыракан ыйтӑва хупласа, т е т т ӗ м л е т с е пыма ҫеҫ пулӑшаҫҫӗ. Сӑмахсем ҫине мар, ӗҫӗн тупсӑмӗ ҫине пӑхас пулсан,—класс кӗрешӗвӗ ҫине урӑхла мар, вӑл—„теорисемпе“ „вӗрентӳсен“ никӗсӗ пулать тесе пӑхсан,—Герцен „Колоколӗ“ шӑпах ӗнтӗ ҫав ыйтӑва лартнине куратпӑр.

Герцен ютҫӗршывра вырӑссен ирӗклӗ прессине пуҫарса янӑ,—ҫакӑнта унӑн чи пысӑк хисеплӗ тивӗҫӗ. „Полярная Звезда“ декабристсен традицине ҫӗкленӗ. „Колокол“ (1857—1867) хресченсене ирӗке кӑларассишӗн пит те вирлӗн тӑнӑ. Чуралла чӗмсӗрлӗхе хускатнӑ.

Анчах та Герцен помещиксен, улпутсен хушшинчен тухнӑ. Российӑран вӑл 1847 ҫулта тухса кайнӑ, вӑл революциллӗ халӑха курман, ҫавӑнпа ӑна ӗненме те пултарайман. Ҫакӑнтан ӗнтӗ „ҫӳлти сийсене“ вӑл либералла апелляци туни килнӗ. Ҫакӑнтан ӗнтӗ унӑн Александр II Вешатель патне „Колоколра“ пылак сӑмахсемпе ҫырнӑ вӗҫӗмсӗр нумай ҫырӑвӗсем килнӗ, вӗсене халӗ йӗрӗнмесӗр вулама та пулмасть. Чернышевский, Добролюбов, Серно-Соловьевич пек ҫынсем, революционер-разночинецсен ҫӗнӗ сыпӑкӗнчен тухнӑскерсем, демократизмран либерализм п а т н е ҫавӑн пек чакнӑшӑн Герцен ҫине кӳреннипе пин хут та тӗрӗс тунӑ. Анчах та чӑнлӑх ҫакна калама хушать: демократизмпа либерализм хушшинче темӗн чухлӗ иккӗленсе тӑнӑ пулсан та, Герценра яланах демократ ҫиеле тухнӑ.

Либеральнӑй хамствӑн чи киревсӗр представителӗ, Кавелин, ӗлӗк чухне „Колоколпа“ шӑпах ӗнтӗ унӑн л и б е р а л ь н ӑ й туртӑмӗсемшӗн ҫавтери савӑннӑскер, конституцине хирӗҫ тухса, революциллӗ агитаци ҫине тапӑнса, „ирӗксӗрленине“ хирӗҫ тата ҫавӑн патне чӗннине хирӗҫ тухса, тӳсӗмлӗ пулмашкӑн вӗрентме пуҫласан, Герцен ҫав либеральнӑй ӑслӑҫӑпа ҫ ы х ӑ н у т ы т м а п ӑ р а х н ӑ. Герцен унӑн „хыткан, йӗркесӗр, сиенлӗ памфлечӗ“ ҫине, „либералланса хӑтланакан правительство валли куҫхыҫӗнче ертсе пыма ҫырнӑ“ памфлечӗ ҫине, „вырӑс халӑхне выльӑх вырӑнне, правительствӑна ӑслӑскер“ вы-

ӑнне шутлакан кавелинла „политикалла-сантиментальнай сентенцисем“ ҫине вирлӗн тапӑнна. „Колоколра“ „Надгробное слово“ ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ, вӑл статьяра „хӑйсен мӑнаҫлӑ та пӗчӗк идейисен ҫӗрӗк ҫыххине эрешлекен профессорсене „питленӗ“, малтан уҫӑ кӑмӑллӑ пек пулнӑ, кайран вара вӗсен кӗсенлӗ шухӑшӗсене сывӑ ҫамрӑксем йышӑнманнишӗн тарӑхнӑ экс-профессорсене“ питленӗ. Ҫак портрет тӑрӑх Кавелин часах хӑйне палласа илнӗ.

Чернышевские арестленӗ хыҫҫӑн, ирсӗр либерал Кавелин ҫапла ҫырнӑ: „Арестсем мана нимӗн чухлӗ те кӳрентермеҫҫӗ... правительствӑна сирпӗтсе антарас тӗлӗшпе революциллӗ парти пур майсене те лайӑх тесе шутлать, правительство хӑйне вара хӑй пӗлнӗ майсемпе сыхлать“. Герцен ҫав кадета ответлес тесе ҫырнӑ пекех, Чернышевские суд тунӑ пирки ҫапла каланӑ: „Мӗскӗн ҫынсем, ҫӳп-ҫапла ҫынсем, йӗпе хурт пек ҫынсем—пире тытса тӑракан вӑрӑ-хурахсемпе ирсӗр этемсен шайкине вӑрҫма кирлӗ мар, тесе калаҫҫӗ“.

Либерал Тургенев, Александр II-мӗшне парӑнса кӑмӑллакан хӑйӗн туйӑмӗсем ҫинчен ҫырса, поляксен восстание пусарнӑ чухне аманнӑ салтаксем валли икӗ ылттӑн парсан, „Колокол“ „кӑвак ҫӳҫлӗ (арҫын)“ Магдалина ҫинчен, „хӑйӗн ҫылӑхӗсем пирки ыйха пӗлмесӗр асапланса ӳкӗнни ҫинчен патша пӗлмест пулӗ тесе, патша патне ҫырса пӗлтернӗскер“ ҫинчен ҫырнӑ. Тургенев вара часах хӑйне палласа илнӗ.

Вырӑс либералӗсен пӗтӗм кӗтӗвӗ Герценран вӑл Польшӑна хӳтӗленӗшӗн пӑрӑнсан, пӗтӗм „образованнӑй общество“ тени „Колоколран“ пӑрӑнсан та, Герцен хӑраса ӳкмен. Вӑл Польшӑна ирӗке кӑларассишӗн ҫаплах тӑнӑ, восстание пусаракансене, палачсене, Александр II-шӗн ҫын ҫакаканӗсене ҫаплах питленӗ. Герцен вырӑс демократийӗн чыслӑхне упраса хӑварнӑ. „Эпир вырӑс ячӗн чыслӑхне упраса хӑвартӑмӑр—тесе ҫырнӑ вӑл Тургенев патне,—ҫавӑн пирки ӗнтӗ чуралла нумайрахӑшран хур куртӑмӑр“.

Крепостной хресчен хӑйӗн ҫураҫнӑ хӗрне тапӑннӑ улпута вӗлерни ҫинчен пӗлтерӳ ҫитсен, Герцен „Колоколра“: „Ку питех те лайӑх!“ тесе хушса каланӑ. „Лӑпкӑн“ „ирӗке кӑларма“ ҫар начальникӗсене лартасси ҫинчен пӗлтерсен, Герцен ҫапла ҫырнӑ: „Хресченсене пӑвас вырӑнне хӑйӗн отрячӗпе вӗсен енне куҫакан пӗрремӗш ӑслӑ полковникех Романовсен тронӗ ҫине ларма пултарӗ“. Палачсене пулӑшакан пулас мар тесе, Рейтерн полковник Варшавӑра (1860 ҫ.) перӗнсе вилсен, Герцен ҫапла ҫырнӑ: „Персе пӑрахас пулсан, хӗҫпӑшалсӑр ҫынсем ҫине перекен генералсене хӑйсене персе пӑрахмалла“. Бездӑра 50 хресчене хӗнесе тӑкса, вӗсен ҫулпуҫне Антон Петрова вӗлернӗ хыҫҫӑн (1861 ҫулти апрелӗн 12-мӗшӗнче), Герцен „Колокол“-ра ҫапла ҫырнӑ:

„О, манӑн сӑмахӑмсем санӑн патна ҫитес пулсан, вырӑс ҫӗрӗнчи ӗҫчен, нуша тӳсекен этем!.. эпӗ сана Петербург синочӗпе нимӗҫ патши лартнӑ хӑвӑн духовнӑй пастырьсенчен мӗнтери йӗрӗнме вӗрентӗттӗм-ши... Эсӗ помещик ҫине тарӑхатӑн, подъячий ҫине тарӑхатӑн, вӗсенчен хӑратӑн—питех те тӗрӗс тӑватӑн; анчах та патшана, архиерея ӗненетӗн... ан ӗнен вӗсене. Патша вӗсемпе, вӗсем—патшанӑн. Эсӗ ӑна халӗ куратӑн, эсӗ, Безднӑра вӗлернӗ ҫамрӑкӑн ашшӗ, эсӗ, Пензӑра вӗлернӗ ашшӗн ывӑлӗ... Санӑн пастырьсем—ху пекех тӗттӗм, ху пекех чухӑн... Ҫавӑн пек пулнӑ ӗнтӗ Хусанта саншӑн хурлӑх тӳснӗ манах Антоний (епископ Антоний мар, Безднӑри Антоний)... Санӑн святительсен ӳчӗсем хӗрӗх сакӑр чудо тӑваймӗҫ, вӗсен кӗлли шӑл ыратнине чараймӗ; анчах вӗсене асӑнни пӗр чудо тума пултарӗ—сана хӑвна ирӗке кӑларӗ“.

Ҫакӑнтан ӗнтӗ чуралла „легальнӑй“ пичете кӗрсе ларнӑ либералсем, Герценӑн вӑйсӑр енӗсене мухтаса, унӑн вӑйлӑ енӗсем ҫинчен шарламасӑр тӑрса, Герцен ҫинчен мӗнтери тискер тата намӑссӑр элеклени курӑнать. Российӑра хӑйӗнче 40-мӗш ҫулсенче революциллӗ халӑха курманни Герценӑн айӑпӗ мар, унӑн инкекӗ пулса тӑрать. 60-мӗш ҫулсенче ҫав халӑха курсан—вӑл пӗр шикленмесӗр либерализма хирӗҫ революциллӗ демократи енне тӑнӑ.

вăл помещиксен патшипе либеральнăй буржуази хушшинче килĕшӳ тăвассишĕн мар, халăх царизма ҫĕнтерессишĕн кĕрешнĕ. Вăл революци ялавне ҫĕкленĕ.

---

Герцена чысланă май, эпир уҫҫăнах вырăс революцине хутшăнса ĕҫленĕ виҫĕ сыпăка, виҫĕ класа куратпăр. Малтан дворянсем тата помещиксем, декабристсем тата Герцен. Вăл революционерсен ушкăнĕ пит те ансăр. Вĕсем халăхран пит те инҫе. Анчах вĕсен ĕҫĕ сая кайман. Декабристсем Герцена вăратнă. Герцен революцилле агитаци ĕҫне сарса янă.

Ăна революционер-разночинецсем, Чернышевскирен пуҫласа „Народная воля“ геройĕсем таранах, хăйсен аллине илнĕ, аслăлатнă, ҫирĕплетнĕ, тĕреклетнĕ. Кĕрешекенсен ушкăнĕ пысăкланнă, вĕсем халăха ҫывăхрах пулнă. „Пулас тăвăлăн ҫамрăк штурманĕсем“ — тенĕ вĕсене Герцен. Анчах та ку тăвăл пулман-ха.

Тăвăл тени, вăл — массăсен хăйсен движенийĕ. Пролетариат, пĕртен-пĕр вĕҫне ҫитиех революцилле класс, вĕсен пуҫĕнче тăрса ҫĕкленчĕ те, уҫҫăн пыракан революцилле кĕрешĕве миллионшар хресченсене чи пуҫласа ҫĕклерĕ. Пĕрремĕш хут тăвăл 1905 ҫулта килсе ҫапрĕ. Иккĕмĕшĕ пирĕн куҫ умĕнчех ӳсме пуҫлать.

Герцена чысласа, пролетариат унăн примерĕ тăрăх революцилле теорин аслă пĕлтерĕшне хаклама вĕренсе пырать; революцие пĕтĕм чĕререн парăнни тата халăх хушшине революцилле вĕрентӳ сарни нихăҫан та, — акнипе вырни хушшинче вуншар ҫул вăхăт пулсан та, — сая кайманнине ăнланма вĕренсе пырать; вырăс тата пĕтĕм тĕнчери революцире тĕрлĕ классем мĕнле вырăн йышăнса тăнине тавҫăрма вĕренет. Пролетариат, ҫав уроксемпе пуянланнăскер, — ирсĕре, патша монархине, лапчăтса пăрахса, — мĕнпур ҫĕршывсенчи социалистла рабочисен ирĕклĕ союзĕ патне ҫул уҫĕ, — Герцен вара ҫав монархине хирĕҫ массăсене пирвайхи хут ирĕклĕ вырăс сăмахĕпе чĕнсе калани урлă аслă кĕрешӳ ялавне ҫĕкленĕ.

„Социал-демократ“ № 26, 1912 ҫ. майăн 8-мĕшĕ (апрелĕн 25-мĕшĕ).

Цена 20 коп.

В. И. ЛЕНИН

# ПАМЯТИ ГЕРЦЕНА

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР